Муркаш район хаçачĕ

Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнченпе тухать

58 (7912) № ✻ Шăмат кун, 2011 çулхи июль (утă) уйăхĕн 30-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

Пĕтĕм ĕçе – комплекслă майпа

Фоторепортаж

Сăн ӳкерчĕксенче:

Николай Ивановпа Алексей Васильев улăм турттарнă çĕрте тăрăшуллă.

Маттур комбайнерсенчен пĕри Олег Григорьев.

Хирти улăма çийĕнчех пресласа фермăна тиесе ăсатаççĕ.

Улăм преслана çĕрте вăй хуракан Иван Порфирьев 37 çул ĕнтĕ трактор рулĕ умĕнче.





Ильич ячĕпе хисепленекен пĕрлешӳллĕ хуçалăхра вырма ĕçĕсем июлĕн 27-мĕшĕнче пуçăнчĕç. Пултаруллă комбайнерсенчен пĕри Олег Григорьев хăйĕн «Палесье» маркăллă «хир карапне» кĕрхи тулă пуссине пĕрремĕш илсе тухрĕ. Пĕрремĕш çаврăмсем... Çĕр ĕçченĕшĕн питех те ответлă тапхăр пуçăнчĕ.

– Ку уйра пирĕн «Московская-39» кĕрхи тулă. Малтанлăха эпир фуражлăх кăна кăштах вырас шутлăччĕ. Юлашки кунсенчи шăрăх çанталăка пула тырă хăвăрт пулса çитрĕ. Халĕ ĕнтĕ тăхтама-кĕтме юрамасть. Пĕтĕм вăя тырă хăвăртрах пухса кĕртес ĕçе мобилизацилеме тивет, – каласа парать хуçалăх ертӳçи Игорь Николаев. – Пĕтĕм ĕçе комплекслă туса пыма тăрăшатпăр. Ку та пысăк пĕлтерĕшлĕ.

Чăнах та çапла. Комбайнсем хыççăн паккуса выртса юлакан сап-сарă улăма çийĕнчех рулонсене преслаççĕ. Ку ĕçре Иван Порфирьев тăрăшать. Сăмах май вăл 1974 çултанпах трактор рулĕ умĕнче, Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ механизаторĕн чыслă ятне тивĕçнĕ.

Çамрăк механизатор Сергей Ильин вара погрузчикпа ĕçлет, рулонсене трактор прицепĕсем çине тиесе парать. Николай Ивановпа Алексей Васильев механизаторсем пĕрин хыççăн тепри тулли тиенĕ тракторсемпе тӳрех фермăна çул тытаççĕ.

Илемлĕ ӳкерчĕк. Куç умĕнчех хир пушанса пырать. Хыççăнах сухалама тухма та пулать.

Акă сарă тулă пуссипе пыракан комбайн чарăнчĕ. Хăвăртрах ун патне Юрий Михеев водитель хăйĕн ГАЗ-3309 автомашинипе васкарĕ. Самантрах бункертан ылтăн тулă кузова тиенме тытăнчĕ. Чăннипех ылтăнпа пĕрех вăл çак куна кĕтсе çулталăкĕпе чунне парса вăй хунă чăн-чăн çĕр ĕçченĕшĕн.

В. ШАПОШНИКОВ.
Автор сăн ӳкерчĕкĕсем.

Раççейре

Киосксенче сăра сутма чараççĕ

Июлĕн 20-мĕшĕнче Раççей Федерацийĕн Президенчĕ Д. Медведев 2013 çултанпа çĕр-шывра кирек мĕнле алкоголь продукцине те (0,5 процент хаярлăхран хăватлăраххисене) сутма чикĕлесе тăракан саккуна алă пуснă. Çапла вара тепĕр çулталăк çурăран киосксемпе павильонсенче, пасарсемпе вокзалсенче, хула транспорт чарăнăвĕсенче, аэропортсемпе автозаправкăсенче сăра сутма чараççĕ. Пысăк лавккасенче те ăна çĕрлехи вăхăтра сутмĕç. Çĕрлехи вăхăтра обществăлла апатлану заведенийĕсенче çеç сăра туянма май пулĕ.

Саккунта палăртнă тăрăх алкоголь продукцине организацисен çеç сутма ирĕк пулĕ. Уйрăм предпринимательсен кун пек ирĕк пулмасть. Вĕсем 2013 çулхи январĕн 1-мĕшĕччен сăра сутма пултараççĕ, анчах та 5 процент хаярлăхран хăватлă маррисене.

Саккунпа килĕшӳллĕн 2012 çулхи январĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа обществăлла вырăнсенче – парксемпе скверсенче, тĕрлĕ кану вырăнĕсенче – алкоголь продукцине ĕçме чараççĕ. Саккун телевиденипе тата радиопа алкоголь продукцине рекламăлассине чарса лартма тивĕç.

Тырă 89–92 миллион тонна пулмалла

Раççей тырă союзĕ палăртнă тăрăх кăçал çĕр-шывĕпе пĕтĕмпе 89–92 миллион тонна тырă пухса кĕртмелле. Кун пирки пресс-конференцире союз президенчĕ Александр Корбут пĕлтернĕ.

Вăл ăнлантарса панă тăрăх лару-тăру хальлĕхе япăх мар. Раççейĕн кăнтăр районĕсенче тыр-пул тухăçлă пулмалла, хура тăпраллă районсенче те тухăç иртнĕ çулхинчен пысăкрах пулма кирлĕ, Çĕпĕрте – иртнĕ çулхи шайра.

Корбут палăртнă тăрăх тулăна кăна 58 миллион тонна пухса кĕртме шанăç пур. Малтанах кун пекех калама май пулман темелле. Халĕ вара çанталăк лайăх тăни пысăк шанăç парать. Акă хура тăпраллă зонăра хăйне евĕрлĕ çанталăк тăрать: пĕр вăхăтрах шăрăх та, нӳрĕ те.

Маларах РФ правительствин президиумĕнче пĕрремĕш вице-премьер Виктор Зубков экспертсем çулталăк итогĕсемпе 90 миллион тонна прогноз пани пирки хыпарланăччĕ. Вăл пĕлтернĕ тăрăх пур культура енĕпе те ӳсĕмсем пулмалла. Сăмахран, урпа пĕлтĕр 6,5 миллион тонна пухса кĕртнĕ пулсан кăçалхи прогноз 17 миллион тонна, хура тулă 330 пин тонна вырăнне 850 пин тонна.

ИТАР-ТАСС.

Район уй-хирĕсенче

Вырма вăй илет

Район уй-хирĕсенче вырма ĕçĕсем вăй илсе пыраççĕ. Çак вăхăта «Восток», «Герой», Илич яч. хис., «Свобода», Суворов яч. хис. хуçалăхсем, «Моргаушская» чăх-чĕп фабрики, В.В. Бархаткин хресчен (фермер) хуçалăхĕ хăйсен «хир карапĕсене» кĕрхи тулă пуссисене илсе тухнă. Районĕпе пĕтĕмпе вырма ĕçĕсене 203 гектар çинче ирттернĕ. Малтанлăха палăртнă тăрăх тухăç пĕр гектар пуçне вăтамран 27,5 центнерпа танлашать.

Ильич яч. хис., «Восток» хуçалăхсенче улăма çийĕнчех пухса тирпейлессине йĕркеленĕ.

Вырмапа пĕрлех выльăх апачĕ хатĕрлес ĕçсем те чарăнман. Нумай çул ӳсекен куракене 94 процент, пĕр çул ӳсекен куракене 31 процент çулнă, утă 7304 тонна (133 процент), сенаж 4143 тонна (63 процент), силос 15517 тонна (84 процент) янтăланă.

Саламлатпăр

Хисеплĕ ĕçтеше – «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçатра бухгалтерта ĕçлекен **Галина Ивановна АЛЕКСАНДРОВАНА** юбилей ячĕпе саламлатпăр.

Утас çулу такăр та анлă пултăр, сывлăху ан хавшатăр. Çемьере килĕшӳлĕх, тăнăçлăх, ăнланулăх сунатпăр, ĕçре вара ăнăçусем тумалла пултăр. Яланах хальхи пек илемлĕ, савăнăçлă пул.

Райхаçат редакцийĕн коллективĕ.

Хаклă та юратнă тăвана, аппана – Оринин ял тăрăхĕнчи Патаккассинче пурăнакан **Раиса Афанасьевна МОКШАНОВАНА** 80 çул тултарнă ятпа чун-чĕререн хисеплесе ăшшăн саламлатпăр.

Сывлăху çирĕп пултăр, кĕрекӳ çăкăр-тăвартан нихăçан та ан татăлтăр. Ачусен, мăнукусен ырлăхне курса савăнмалла пултăр.

Саламлаканĕ: Николаевсен çемйи.

Юратнă мăшăра, аннене – Муркашра пурăнакан **Елена Владимировна ЗАЙЦЕВАНА** 60 çул тултарнă ятпа чун-чĕререн ăшшăн саламлатпăр. Яланах хавас кăмăл-туйăмлă, çирĕп сывлăхлă пул, телейпе ăнăçу санпа пĕрле пулччăр, ĕмĕтĕрсем çитсе пыччăр. Эпир сана юрататпăр, хисеплетпĕр, санпа мухтанатпăр.

Пĕрле савăнмалăх хавас пул ялан,
Ĕçӳ ăнса пытăр, ан чактăр вăй сан.
Сана хĕвел пахтăр савса, юратса,
Телей кăна пултăр хальхи пурнăçра.

Саламлаканĕсем: юратнă мăшăрĕ, хĕрĕсемпе кĕрӳшĕсем, мăнукĕсем.

Пенси ыйтăвĕсемпе

Ĕç пенсийĕсем ӳсĕç

Чăваш Енре августăн 1-мĕшĕнчен тытăнса ĕçлекен пенсионерсен ĕç пенсийĕсене çĕнĕрен шутласа парĕç. Çавна валли заявлени çырма кирлĕ мар.

Пенси виçисене çĕнĕрен шутласа парасси ватлăха пула, инвалида тухнипе тата çемьере тăрантаракана çухатнипе ĕç пенсийĕ илсе тăракансене пырса тивет. Çавăн пекех ĕç пенсийĕн страхланă пайне ватлăха пула палăртнă пулсан çар пенсионерĕсен, кунпа пĕрлех страхланă пайăн пĕр тӳпине илсе тăракан патшалăх служащийĕсен те пенси виçисем ӳсеççĕ.

Корректировкăна çуллен августăн 1-мĕшĕнчен тытăнса гражданинăн пенси пама тытăннă е пенси виçине юлашки хут корректировка тунăранпа Пенси фондне куçнă страховани взносĕн виçине кура туса ирттереççĕ.

Пенси виçисене заявлени çырмасăрах корректировка тăвас йĕркепе виççĕмĕш çул ĕнтĕ усă куратпăр. Çакă ĕçлекен пенсионерсемшĕн питех те меллĕ. Мĕншĕн тесен вĕсен счечĕсем çине страховани взносĕсем куçса тăраççĕ.

Ĕç пенсийĕн виçи кашни çыннăн расна. Вăл тӳрремĕнех ĕç паракан уншăн взноссем мĕн чухлĕ куçарса панинчен килет. Çапла вара корректировка хыççăн пенси мĕн чухлĕ ӳсесси те пурин те пĕр пек пулма пултараймасть.

Саккун вара çак йĕркене те сыхласа хăварнă. Пенсионер хăйĕн пенси виçине çĕнĕрен шутлаттарма заявлени те çырма пултарать. Кун пек чухне ăна пенси виçине пенси пама тытăннăранпа, пенси виçине çĕнĕрен шутласа панăранпа е корректировка тунăранпа 12 уйăх иртнĕ хыççăн çĕнĕрен шутласа пама тивĕç. Ун пек пулсан унăн августри корректировка кирлĕ марри пирки заявлени çырас пулать.

РФ Пенси фончĕн районти управленийĕ.

Райадминистрацире

Хисеп грамотипе наградăланă

Район администрацийĕн пуçлăхĕн 2011 çулхи июлĕн 21-мĕшĕнчи 691 № йышăнăвĕпе нумай çул тухăçлă ĕçленĕшĕн тата обществăлла ĕçре активлă пулнăшăн «Çĕнтерӳ ялавĕ» Муркаш район хаçачĕ» Чăваш Республикин автономиллĕ учрежденийĕн тĕп бухгалтерне **Галина Ивановна АЛЕКСАНДРОВАНА**;

нумай çул тухăçлă ĕçленĕшĕн, районти пĕчĕк тата вăтам бизнес аталанăвне тӳпе хывнăшăн:

– Хорнуй ял тăрăхĕнчи уйрăм предпринимателе **Андрей Иванович БЫКОВА;**

– Катькас ял тăрăхĕнчи уйрăм предпринимателе **Александра Владимировна ХАРИТОНОВАНА;**

– Оринин ял тăрăхĕнчи уйрăм предпринимателе **Татьяна Михайловна БАРДАСОВАНА** район администрацийĕн Хисеп грамотипе наградăланă.

Пысăк спорт

В. Соколова тĕнче чемпионатне хутшăнать

Шупашкарта иртнĕ Раççейри çăмăл атлетика чемпионатĕнчи пĕтемлетӳпе августра Кăнтăр Корея çĕр-шывĕнче ирттерме палăртнă тĕнче чемпионатне кам каяссине палăртрĕç. Командăра пĕтĕмпе 83 спортсмен: 36 арçын тата 47 хĕрарăм. Раççейĕн пĕрлештернĕ командине чăваш спортсменĕсем те кĕме пултарнă.

Шупашкарти стадионта 3000 метрлă дистанцире ăнăçлă чупса ăмăртнă Людмила Кузьминана (Красноармейски районĕнче çуралса ӳснĕ) пĕрлештернĕ команда йышне кĕртнĕ.

Унччен маларах, Сочи хулинче иртнĕ хĕллехи чемпионат кăтартăвĕ тăрăх, пирĕн районăн мăнаçлăхĕ – Вера Соколова – Раççейĕн пĕрлештернĕ командине кĕме пултарнăччĕ. Вера Тэгу хулинчи старта тĕнче рекордсменкин ячĕпе тухать. Ăнăçусем сунатпăр!

Н. НИКОЛАЕВА.

Вĕренӳ çулне хатĕрленетпĕр

Алăксем те, чӳречесем те çĕнĕ пулаççĕ

Районти шкулсенче çĕнĕ вĕренӳ çулне хатĕрленес тапхăр вĕçленсе пырать. Ятарлă комисси шкулсенче туса ирттернĕ ĕçсемпе паллашать, вĕсем ачасене кĕтсе илме хатĕр е хатĕр маррине пăхса тухать.

Ĕнерхи кун тĕлне комисси 12 шкула йышăннă, вĕсем çĕнĕ вĕренӳ çулне хатĕр. Комисси тĕрĕслевĕ малалла пырать.

Чуманкассинчи вăтам шкулта (маларах пĕлтернĕччĕ ĕнтĕ унта юсав ĕçĕсем пысăк калăпăшлă пулнине) ĕçсем вĕçленмен-ха.

– Пирĕн патра «Мера» чикĕллĕ яваплăхлă пĕрлешӳ юсав ĕçĕсем пурнăçлать. Уйăрса панă 3 миллион ытла укçа-тенкĕне пĕтĕмпех шкула юсаса çĕнетес ĕçе хыватпăр. Районти типлă шкулсенчен чи малтан хута янă шкулта вара ĕçĕ чылай. Алăксене пĕтĕмпех улăштаратпăр, иккĕмĕш хутри класс пӳлĕмĕсенче чӳречесем улăштарнă ĕнтĕ, халĕ пĕрремĕш хутра та çакăн пек ĕç пурнăçламалла. Кунсăр пуçне спортзалта душ пӳлĕмĕсем тумалла, тротуар çĕнетсе сармалли те пур. Пĕр сăмахпа каласан ĕçĕ чылай, – пĕлтерет шкул директорĕ Валерий Михайлович Васильев.

Шкултан кăçал 18 çамрăк вĕренсе тухнă. Çĕнĕ вĕренӳ çулне пĕрремĕш класа шăп çавăн чухлĕ ача килмелли паллă. Апла йыш чакмасть. Иртнĕ вĕренӳ çулĕнче кунта 221 ача вĕреннĕ. Ку тăрăхра ачасем çуралассине тишкернĕ тăрăх çитес çулсенче шкулта 200 ачаран чакмалла мар.

Шкулта ĕçсем мĕнлерех пынипе кĕçнерни кун Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн председателĕ О. Макаров, вĕренӳпе çамрăксен политикин министрĕ В. Иванов, Роспотребнадзорăн республикăри управленийĕн ертӳçи Н. Луговская тата Чăваш Республикинчи пушар надзорĕн патшалăх тĕп инспекторĕ Н. Петров паллашрĕç. Кунсăр пуçне ĕçлĕ ушкăн Калайкассинчи вăтам, Кашмашри тĕп шкулсене тата кирпĕч заводне çитсе курчĕ.

Н. НИКОЛАЕВА.

Электронлă услуга: ĕçсĕррисем валли те

Электронлă правительство

Августăн 1-мĕшĕнчен пуçласа республикăри ĕçпе тивĕçтерекен центрсенче патшалăхăн хăш-пĕр услугисемпе электронлă майпа тивĕçтерме пуçлаççĕ. Çапла вара ĕç шыракансемпе ĕç паракансен те электронлă услугăсемпе усă курма май пур. Электронлă почтăпа ĕçпе тивĕçтерекен центра йышăнăва çырăнма та, професси юрăхлăхĕн тестне çырма та, обществăлла ĕçсене хутшăнма килĕшнине пĕлтерсе заявлени çырма та, ытти услугăсем илме те май тупăнчĕ. Электронлă услугăсемпе усă куракансен пĕр условие çеç шута илмелле – алă пуснин электронлă варианчĕпе усă курмалла. Ăна вара «Ростелекомра» илмелле. Алă пуснин электронлă варианчĕ вăхăта чылай перекетлет: кирлĕ услугăсене килтен тухмасăрах илме пулать.

Республикăри ĕç тăвакан влаç органĕсем патшалăх услугисемпе электронлă майпа тивĕçтересси çине, вăл шутра çынсене ĕçпе тивĕçтерес сферăра та, туллин куçассине Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн хушăвĕпе 2012 çулхи август уйăхĕччен вĕçлеме палăртнă.

Ĕçпе тивĕçтерес сферăра, сăмахран, чи малтанах çак электронлă услугăсемпе тивĕçтерме палăртнă: тӳлевлĕ обществăлла ĕçсене хутшăнма килĕшнине пĕлтерсе заявлени çырасси тата çакăн пек ĕçсене йĕркелесси пирки информаци парасси, çул çитмен 14–18 çулхисенчен каникул вăхăтĕнче, ĕç тупассинче хӳтлĕх кирлĕ гражданнисенчен вăхăтлăх ĕç тупса пама çырнă заявленисене йышăнасси, пуçламăш тата вăтам профессиллĕ пĕлӳ паракан вĕрентӳ учрежденийĕсенчен вĕренсе тухнă 18–20 çулхи гражданнисенчен пĕрремĕш хут ĕç тупса пама ыйтса çырнă заявленисене йышăнасси, ĕç паракансенчен кирлĕ ĕçченсем тупса пама ыйтнă, гражданнисенчен юрăхлă ĕç тупса пама ыйтнă заявленисем йышăнасси, ĕçе вырнаçас текенсем пирки ĕç паракана информаципе тивĕçтересси тата ытти те.

Хальлĕхе вара республикăри ĕçпе тивĕçтерекен патшалăх служби вăхăтлăх çирĕплетнĕ йĕркепе килĕшӳллĕн электронлă услугăсемпе усă куракансен ятарлă анкета ыйтăвĕсем çине хуравламалла. Анкета Чăваш Республикин патшалăх услугисен порталĕ çинче те, Чăваш Республикин ĕçпе тивĕçтерекен патшалăх службин сайчĕ çинче те пур. Алă пуснин электронлă варианчĕ пуррисем анкета хуравĕсене районти ĕçпе тивĕçтерекен центра электронлă почтăпа ярса пама пултараççĕ.

И. ДИМИТРИЕВА,
районти ĕçпе тивĕçтерекен центр ертӳçи.

«Пур ĕçе те вăхăтра тума ĕлкĕрмелле»

Иртнĕ ытлари кун районта вырма пуçланчĕ. Чи малтанах уя «Муркашри чăх-чĕп фабрики» акционерсен уçă обществин ĕçченĕсем тухрĕç. Çак кунах район администрацийĕн пуçлăхĕ Ю.А. Иванов ял хуçалăх предприятийĕсемпе хресчен (фермер) хуçалăхĕсен ертӳçисемпе канашлу ирттерчĕ. Унта пăхса тухнă тĕп ыйтусенчен пĕри шăпах вырмана йĕркеллĕ ирттерсе ярасси пирки пулчĕ.

– Татса памалли ыйтусем нумай, – палăртрĕ Юрий Александрович. Вĕсенчен пĕри комбайнсене вырмана хатĕрлесе çитерес ыйту та. Районта пĕтĕмпе 63 комбайн учетра тăрать пулсан, 37-шне юсаççĕ. Канашлу ирттернĕ кун тĕлне вĕсенчен 5-шĕ кăна уя тухма хатĕр пулни хуçалăхсен ертӳçисене шухăшлаттарма кирлех.

Вырма вăхăтĕнче ĕç сыхлавĕн тата ĕç, пушар хăрушсăрлăхĕн ыйтăвĕсем çинчен те пĕр саманлăха та манмалла мар.

Кăçал çанталăк ял ĕçченне ĕçне майлаштарма çул уçса пырать. Çавăнпа та, район администрацийĕн пуçлăхĕ калашле, çанталăкăн кашни саманчĕпе туллин усă курмалла. Типĕ е шăрăх çанталăкра тăвас ĕçе тума вăхăта тăсни кайран каялла килсе «çапма» пултарать. Мĕншĕн тесен каярахпа çанталăк мĕнле пуласси çинчен халь калама йывăр. Кĕрхи культурăсем вара пиçсе çитнĕ: тыр-пул хресченрен хăйне кĕлете кĕртме ыйтать. Ку ĕçре вара тырă типĕтмелли агрегатсем те хатĕр пулни вырăнлă.

Ял ĕçченĕн паян тем пирки те пуç ыратать. Тырпула пухса кĕртнипе пĕрлех выльăх апатне те хатĕрлесе çитермелле. Утта районĕпе палăртнинчен ытларах хатĕрлесе хучĕç ĕнтĕ. Сенаж-силос хатĕрлесси малалла пырать.

Район администрацийĕн пуçлăхĕн пĕрремĕш çумĕ, ял хуçалăх пайĕн ертӳçи В.А. Калинин докладĕнчен çакă курăнать. Тĕрĕслеттернĕ уттăн 64 процентĕ 1 класли. Юрий Александрович сенажпа силос хатĕрленĕ çĕрте те пахалăх пĕрремĕш вырăнта пулмаллине палăртрĕ. Районта выльăх апатне хатĕрленĕ хуçалăхсем пур ĕнтĕ. Çавăнпа та ку ĕçе вĕçлейменнисен вĕсен техникипе усă курма каласа татăлмалла.

Кунпа çеç ĕç вĕçленмест-ха çулла ял çыннин. Кĕрхи культурăсем валли çĕр хатĕрлемелле, «Россельхозцентрăн» Муркашри филиалĕн тĕп агрономĕ Р.Ф. Александрова сортлă мар, акмалли кондиции çитермен вăрлăха лартма юраманни çинчен аса илтерчĕ.

Ларура хăш-пĕр хуçалăхсенче сăвăм чакнин сăлтавĕсене те пăхса тухрĕç. Вĕсен тата сенаж-силос хатĕрлес ĕçе вăраха янă хуçалăх ертӳçисем те çитменлĕхсене пĕтерес çул-йĕрпе паллаштарчĕç.

Фермăсенче паян вара хĕле хатĕрленес ĕç пырать. Паянхи куна районти 16 сĕт-çу ферминчен ытларахăшĕнче юсав ĕçĕсем пыраççĕ. Çавăн пекех пур сысна ферминче те августăн 1-мĕшĕнче районта фермăсене хĕле хатĕрлес уйăхлăх пуçланать. Сентябрĕн 15-мĕшĕччен пур çĕрте те хатĕрлев ĕçĕсем вĕçленмелле.

Чăннипех те, Юрий Александрович палăртнă пек, пур ĕçе те вăхăтра тумалла ял ĕçченĕн.

Канашлура хуçалăх ертӳçисем механизаторсене хатĕрлессине малтанхи çулсенчи пек шкултанах пуçламаллине палăртрĕç. Район администрацийĕн пуçлăхĕ Ю.А. Иванов ку ĕç районта кăçалхи вĕренӳ çулĕнчен тытăнассине палăртрĕ. Харăсах темиçе шкулта аслă классенче вĕренекенсем механизатор профессийĕн вăрттăнлăхне алла илĕç.

Апла пулсан ял хуçалăхĕнче пыра-киле механизатор-комбайнерсем çителĕклĕ пулас шанчăк пур.

Паян вара вырма ĕçĕсем районти ытти хуçалăхсенче те пуçланчĕç. Ильич яч. хис., Суворов яч. хис, «Восток», «Свобода»,.. – хуçалăхсен уйĕсенче те комбайнсем хушăнсах пыраççĕ.

Л. ПАВЛОВА.

Райадминистрацире

Хисеп грамотипе наградăланă

Район администрацийĕн пуçлăхĕн 2011 çулхи июлĕн 8-мĕшĕнчи 610 № йышăнăвĕпе хăй тытăмлăх органĕсенче нумай çул тухăçлă ĕçленĕшĕн тата обществăлла ĕçре активлă пулнăшăн Мăн Сĕнтĕр ял тăрăх администрацийĕн 3 разрядлă специалистне **Валентина Васильевна КРАСНОВĂНА** район администрацийĕн Хисеп грамотипе наградăланă.

Ял хуçалăх производствинче нумай çул хушши тăрăшса ĕçленĕшĕн район администрацийĕн пуçлăхĕн 2011 çулхи июлĕн 14-мĕшĕнчи 647 № йышăнăвĕпе «Ударник» хуçалăхăн иккĕмĕш производство участокĕн складсен заведующине **Раиса Георгиевна ВАСИЛЬЕВĂНА** район администрацийĕн Хисеп грамотипе наградăланă.

Техосмотр

Пĕр çулталăк пурин валли мар

Хăш-пĕр автомашина водителĕсемшĕн техосмотр тăратмалли вăхăт малтан палăртнă пек пĕр çулталăк кăна мар, ытларах та тăсăлма пултарать. Ку вăл январĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса техосмотр пирки калакан саккун вăя кĕнипе çыхăннă.

Аса илтеретпĕр. Май уйăхĕнче правительство постановленийĕ вăя кĕчĕ. Унпа килĕшӳллĕн енчен те çăмăл автомашинăсемпе мототранспортăн техосмотр тăратмалли вăхăчĕ кăçал тухать пулсан çак тапхăра пĕр çулталăклăха тăсса пачĕç. Çак кунсенче техосмотр çинчен калакан саккуна алă пуснă. Çĕнĕ саккун техосмотр тăратас процедурăна ОСАГО полисĕн срокĕ хăçан тухассипе çыхăнтарать.

Çапла вара, сăмахран, техосмотр срокĕ кăçал апрельте тухнă пулсан ăна тӳрех 2012 çулхи апреле куçарнă. Анчах та полис срокĕ çитес çулхи сентябрьте кăна тухать пулсан вара унччен техосмотр та тăма кирлĕ мар. ГИБДД инспекторĕсем январĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса çул çинче ТО талонĕ пуррипе çуккине тĕрĕслемеççĕ вĕтха.

Правительство постановленийĕпе техосмотр срокне 2011 çулхи сентябрьтен 2012 çулхи сентябрьччен тăсса панисене, енчен те вĕсен страховки 2010 çулхи май уйăхĕнче вĕçленет пулсан, йывăртарах килет. Мĕншĕн тесен саккунра палăртнă тăрăх талон срокĕ тухасси 6 уйăхран каярах юлнă пулсан страхлакан компани ОСАГО полисне сутмасан та пултарать. Апла вĕсен çĕнĕ полис иличчен техосмотр тухма тивет.

Анчах та страховщиксем палăртнă тăрăх тĕрĕслев процедури халех ĕнтĕ çĕнĕ правилăсемпе иртмелле. Автостраховщиксен Раççейри союзĕн ертӳçи Сергей Духанин пĕлтернĕ тăрăх техосмотр енĕпе ĕçлекен управлени МВД системинче пулнă тата ку ведомствăпа килĕшӳ туса техосмотр тăратассипе ĕçленĕ коммерциллĕ структурăсене аккредитацилеме тытăнма хатĕр. Январĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса автостраховщиксен Раççейри союзĕ заявкă панă тата техосмотр тăратас енĕпе ĕçлеме хатĕр ытти техосмотр операторĕсене те аккредитацилеме пуçăнасшăн.

Кунта автостраховщиксен Раççейри союзĕ халĕ ОСАГО системинче усă куракан практикăна пурнăçа кĕртесшĕн: бланксем парассине тĕрĕслесе тăрасси. Çăхавсем нумай пулсан автостраховщиксен союзĕн айăпа кĕнĕ организацие ТО бланкĕсене парассине чарса лартма май пулĕ.

Çăхавсем пирки. Страховщиксем тĕлĕшпе çăхавсем пулни никамшăн та çĕнĕлĕх мар. Енчен те компани ĕçлемест пулсан ун çине никам та тимлĕх уйăрмасть. Ĕçлекен компани тĕлĕшпе вара уйăхне вăтамран кун пек тĕслĕхсем 2–6 таран пуçаççех.

История кашнин пĕлмелле

Июлĕн 28-мĕшĕ – Раççей тĕне кĕнĕ кун

Кашни çыннăн история аван пĕлмелле, мĕн пĕлнине ламран лама куçармалла. Хăй историне пĕлмен çын вара малашлăха та чухлаймĕ, ыранхи куна та тĕлленеймĕ.

Раççей тĕне кĕнĕ кун 988 çулта Владимир княç çине тăнипе пулса иртнĕ, паллах çакă пĕр саманта тата вырăс халăхне пачах пăлхантармасăр иртме пултарайман. Тĕрлĕ тĕпчев палăртнă тăрăх вара çак ĕçпе самай маларах Мефодийпе Кирилл Хазар каганатне 858 çулта çул çӳреве кайсан тĕл пулнă.

Игорь княç вилнĕ хыççăн Ольга княгиня 955 çулсенче Константинополь хулинче пулса тĕне кĕрет. Çапах та ун чухнех тĕне кĕресси ытла анлă сарăлаймастьха. Унăн Святослав ятлă ывăлĕ тĕне кĕрессине малти вырăна хумасть, яланхи йăлапах пурăнать.

Тепĕр ывăлĕ Владимир княç Корсунинче тĕне кĕнĕ. Унччен маларах вара суккăрланса ларнă пулнă, тĕне кĕнĕ хыççăн куçĕ юсаннă. Çакăн хыççăн вăл пурнăç çине пачах урăхла пăхнă. Вăл çине тăнипе малашне вырăс халăхĕ тĕне кĕресси пулса иртет. Çапла вара çу кунĕн юлашки тапхăрĕнче вăл çине тăнипе Днепр шывĕн çыранĕнче халăха пухнă, вĕсене византи священникĕсем тĕне кĕртнĕ. Ахаль çын куçĕпе пăхсан çак тапхăр пирĕнтен чылай катара пек туйăнать, анчах та истроишĕн тин кăна пулнă пулăм.

Çак куна халалласа ирттернĕ анлă калаçу июлĕн 27-мĕшĕнче ял тăрăхĕсем хушшинчи Муркашри тĕп библиотека ĕçченĕсем йĕркеленипе тата Муркашри ачапăча библиотекинче вăй хуракансем пулăшнипе иртрĕ. Кунта ачапăча йышлăн пухăнчĕ. Чи малтанах пухăннисем Раççей тĕне кĕнĕ тапхăра сăнланă видеоролик пăхрĕç, истори иртнĕ тапхăрĕнчен кăсăклине чылай пĕлчĕç. Çавăн пекех кунта çак тĕлĕшпе йĕркеленĕ кĕнеке куравĕ ĕçлерĕ, ачасене хавхалантарма юмахри герой та пулчĕ.

Тăван кĕтес (Муркаш ен) кашниншĕнех çывăх, апла пулсан унпа çыхăннă история татах та аванрах пĕлмелле. Муркаш салинче 1880 çулта прихожансен укçи-тенкипе çĕкленĕ чиркӳ ĕçĕхĕлĕ пирки халĕ тăрăшакан Федор атте тĕплĕн каласа пачĕ.

– Шел пулин те çавăн чухнехи чиркӳ вут-кăвар алхаснине пула çунса кайнă. Турă пулăшнипе, халăх тăрăшнипе çĕнĕрен çĕклеме май килнĕ чиркӳ çуртне. Унтанпа вăхăт чылай иртрĕ. Халĕ вара эпир Турă пиллĕхĕпе аслисен ĕçне малалла тăсатпăр. Ачасем, сирĕн кун-çул таппинчен кая юлмалла мар. Мĕн кирлине ăша хывма тăрăшмалла, – терĕ Федор атте пурне те ырă ĕçсем ытларах тума йыхравласа.

Ачасемшĕн кăсăкли кунта чылай пулчĕ. Вĕсен ăс-тăн аталанăвне тĕрĕслеме викторина та йĕркеленĕ. Кунта хутшăнакансем асăнмалăх парнесене те тивĕçрĕç.

Р. ИЛЛАРИОНОВА.

Кил тата хушма хуçалăх

Халăх календарĕ

Çанталăка сăнар-ха

Кашни уйăх хăйне май илĕртӳллĕ. Август уйăхĕ вара тĕрлĕ апат-çимĕçпе пуян, уй-хирти тыр-пул та пиçсе çитет. Вĕри сывлăш температури майĕпен чакать, малашне ăшă çанталăк кĕтет. Садсенче пан улми пиçет, купăста пуçĕ пысăклансах пырать, помидор та хĕрелет. Уй-хирте çăкăр пухса илес хĕрӳ ĕç пырать. Çапла вара майĕпен çу кунĕ хыçа юлать. Кĕçех Пыл спасĕ çитет, ун хыççăн Пан улми спасĕ, виççĕмĕшĕ – Мăйăр спасĕ.

Август çитнĕ май пĕвери шыв температури самай чакать, малашне вара шыва кĕме те сивĕ пулать. Илем кунĕ çитсен пĕвене тимĕр туя янă, Илем кунĕнче кăнтăрлаччен çулла, ун хыççăн вара кĕркунне теççĕ халăхра.

Августăн 1-мĕшĕ – Макрида – çумăрлă пулсан кĕр те çапла пулать.

Августăн 2-мĕшĕ – Илем – Питрав кунĕнче кун пĕр сехет кĕскелет, Илем кунĕнче вара икĕ сехет çухалать.

Августăн 7-мĕшĕ – Анна – лăпкă та уяр пулсан хĕл шартлама сивĕ пулать, çумăр çусан вара ăшă та юрлă хĕллене кĕтмелле.

Августăн 11-мĕшĕ – Палан – пĕрремĕш сивĕ пуçланать.

Августăн 14-мĕшĕ – Пыл спасĕ – чĕкеç ăшă енне вĕçсе каять. Чĕкеç – çуркуннене пуçлаканни, кĕркунне çитнине систерекенни.

Августăн 15-мĕшĕ – Степан-Сеновал – сентябрь уйăхĕпе пĕр пек килет.

Августăн 19-мĕшĕ – Пан улми спасĕ – малашнехи кĕлет пуянлăхĕ пирки шутламалла.

Августăн 21-мĕшĕ – Мирун-Çил хăвалакан – Мирун-Çил хăвалакан çул çинчи тусана хăвалать, шăрăх çу кунĕшĕн тунсăхлать.

Августăн 23-мĕшĕ – Лавренти – шыв лăпкă пулсан хĕл те тӳлек пулать.

Августăн 27-мĕшĕ – Михали – çиллĕ кун пулсан кĕр йĕпе килет.

Августăн 28-мĕшĕ – Уçпени – малтанхи карчăк ăшши пуçланать.

Августăн 29-мĕшĕ – Мăйăр спасĕ – тăрна ăшă еннелле вĕçрĕ пулсан Пукрав сивĕ килет.

Халăх сăнанинчен.

Çӳлтен çӳле улăхать виноград.

В. ШАПОШНИКОВ фотоэтючĕ.

Пахчари хальхи ĕçсем

Çамрăк улмуççисене азотлă удобренисемпе апатлантарса тислĕк шывĕпе шăварсан вĕсен симĕс хунавĕсем нумай вăхăт хушши ӳсеççĕ, анчах та кĕрхи сивĕсем пуçланиччен те хытса çитеймеççĕ. Хĕлле вара шăнаççĕ. Ун пек пуласран июль уйăхĕнче çамрăк сад пахчинче азотлă удобренисемпе, тислĕк шывĕпе усă курмалла мар. Нумай çимĕçлĕ ватă йывăçсене азотлă удобренисемпе, тислĕк шывĕпе апатлантарма юрать. Шăрăх вăхăтра шăвармалла. Ӳсекен улмасемпе йывăрланнă туратсем айне вăхăтра чарак лартма та манмалла мар. Час-часах хуртсем шăтарнипе аманнă пан улмисем çĕре ӳкеççĕ. Вĕсене кашни ирех витрене (карçынккана мар) пуçтармалла.

Шăпах çамрăк вăрман улмуççийĕсене, груша йывăçĕсене папакпа сыпмалли вăхăт. Сыпма палăртнă йывăçсене (сĕткенĕ ытларах пултăр, сыпнă чух хуппи лайăхрах хăйпăнтăр тесе) пĕр-икĕ кун маларах шăвараççĕ.

Çамрăк хурлăхан, крыжовник тĕмĕсене çум курăк пусса илесрен асăрхаса тăмалла, шăрăх, типĕ кунсенче (каç кӳлĕм) шăвармалла. Çырла тăвакан тĕмсене шыв нумай кирлĕ.

Хăмла çырли лаптăкĕнче чирлĕ тĕмсем пулсан вĕсене пĕр шеллемесĕр каларса çунтарса ямалла. Шăрăх çанталăкра хăмла çырлин тĕмми-сене шăварни аван.

Хурăн çырли лартма палăртнă çĕр лаптăкĕ çине минераллă (азотлă, фосфорлă, калиллĕ) удобренисем, çĕрнĕ тислĕк хураççĕ, унтан 20–25 см. тарăнăшне кĕреçепе пусса тухаççĕ. Тăпрана кăштах пусăрăнса вырнаçма вăхăт кирлĕ. Унччен ĕрчетме тесе палăртнă чи тухăçлă тĕмсенчен тухса кăштах тымарланнă калчасене пĕчĕк кĕреçепе каларса илеççĕ те вăхăтлăха (12–18 куна) питомнике лартаççĕ. Калчасене питомникре çăра (10х10 см.) вырнаçтараççĕ. Лайăх тымарлансан, 4–5 çулçă каларсан хурăн çырлин калчисене (хĕвелсĕр, сулхăн кунсенче) пахчана каларса лартаççĕ. Ретсен хушши 50–60 см., ретри калчасен хушши 25–30 см. кирлĕ.

Сулхăнрах вырăнта калчасене ирĕкрех (пĕр-пĕринчен 35–40 см.) лартаççĕ. Çырла тăвакан лаптăкра юлашки çырласене пухса кĕртнĕ хыççăн тĕмсене тасатаççĕ: чирлĕ, хăрнă, ватăлса хуралнă çулçăсене, çамрăк «уссисене» касса илеççĕ. Хурăн çырли çинче тĕрлĕ чир сарăлнă, сăвăссем нумай пулсан çулçăсене тĕпренех касса (çулса) илеççĕ те компост тунă çĕрте усă кураççĕ. Ку ĕçе çырлана пухса пĕтернĕ хыççăнах тăвас пулать. Çулçăсăр юлнă тĕмсене нитрафен тата карбофос шĕвекĕсемпе сирпĕтеççĕ. Ретсем хушшине канавсем чавса унта минераллă удобренисем, çĕрнĕ тислĕк, йывăç кĕлĕ хураççĕ те тăпрапа хутăштараççĕ. Ун хыççăн канавсене тислĕк шывĕ, 2–3 хутчен шыв яраççĕ.

В. СЕРГЕЕВ, пахчаçă.

Август хăйĕн йĕркине тăвать

Уйăх календарĕ

ПАХЧАРА

Август уйăхĕнче пахча çимĕç пирĕнтен тимлĕх нумай ыйтать: йăрансене кăпкалатса тăмалла, çумран тасатмалла, пахча çимĕçе апатлантармалла. Çĕр улми каларас умĕн 2 эрне малтан çеçкине çулса хумалла. Çакă çĕр улмине «пулса çитме» май парать. Пăрăçпа помидор çеçкисен тăррисене татса пăрахмалла.

Августăн 1-мĕшĕ, кăнтăрлаччен – ӳсен-тăран акмалла-лартмалла е куçарса лартмалла мар.

Августăн 1–3-мĕшĕсем (14 сехетчен) – пахча çимĕçпе улма-çырла пухмалла. Çĕр çырлине органикăллă удобренипе апатлантармалла. Компост хатĕрлемелле. Сарăхса кайнă çеçкесене çунтармалла.

Августăн 3–5-мĕшĕсем (16 сехетчен) – пахча çимĕçе шăварма тата шĕвĕ удобренипе апатлантарма меллĕ вăхăт мар. Симĕс çеçке туса илме кресс-салат, шпинат акма юрать. Çĕр çырли лартма лайăх вăхăт.

Августăн 5–7-мĕшĕсем – симĕс çеçке туса илме кресс-салат, шпинат акмалла. Купăста пуçĕ пушăраххăн çаврăнать пулсан ăна микроэлементсемпе апатлантармалла. Çĕр çырли лартма юрать.

Августăн 8–9-мĕшĕсем – симĕс çеçке туса илме кресс-салат, шпинат акма юрать. Пекин купăстине (çулçăллине тата час пулса çитекеннине) те лартма меллĕ вăхăт. Теплицăри хăяра тĕрлĕ чир-чĕртен хăтарас тата хурт-кăпшанкăран тасатас тесе имçамламалла.

Августăн 10–12-мĕшĕсем – шăварма тата тымарсене апатлантарма юрăхсăр вăхăт. Çĕр кăпкалатмалла, çĕр çырлин авкисене (усикĕсене) татмалла. Теплицăсемпе парниксене хывма органика пухмалла. Çак вăхăтра пухнă пахча çимĕç лайăх упранать.

Августăн 13–14-мĕшĕсем – нимĕн те акма-лартма юрамасть. Çĕрпе ĕçлемелле.

САДРА

Августăн 1-мĕшĕ, кăнтăрлаччен – йывăç-тĕм лартма е куçарса лартма юрăхсăр вăхăт. Сиен кӳрекен хурт-кăпшанкăпа кĕрешмелле.

Августăн 1–3-мĕшĕсем (14 сехетчен) – хурлăхан тĕммин пĕр çулхи çинçе хунавĕсене касмалла, ытти хунавсен тăррисене татса илмелле. 4–5 вăйлăрах хунав хăвармалла.

Августăн 3–5-мĕшĕсем (16 сехетчен) – шăварма тата шĕвĕ удобренипе апатлантарма меллĕ вăхăт мар. Хăмла çырлин çырла тунă хунавĕсене касса илмелле.

Августăн 5–7-мĕшĕсем – çĕр çырлин çĕнĕ плантацийĕсене йĕркелемелле.

Августăн 8–9-мĕшĕсем – тухăç пухмалла, анчах та чĕрĕлле çиме кăна, упрама мар. Çĕре минераллă удобрени хывма юрать.

Августăн 10–12-мĕшĕсем – чĕрĕлле çиме тухăç пухса илмелле. Йывăç тата тĕмсем ӳстерме туратсене çĕре чикмелле.

Августăн 13–14-мĕшĕсем – нимĕн те лартма юрамасть. Çĕрпе ĕçлемелле, сиен кӳрекен хурт-кăпшанкăпа тата чирсемпе кĕрешмелле.

Уяв сĕтелĕ

Çĕр улми запеканки

Малтанах çĕр улмине хуппипе пĕçермелле. Сивĕнсе çитсен ăна шуратмалла та шултра терка витĕр кăлармалла. Хăвăра килĕшнĕ чухлĕ тăвар тата кăштах тип çу хушса пăтратмалла. Пĕçермелли çу сĕрнĕ формăна сийĕн-сийĕн туса малтан çак çĕр улмие, хыççăн суханпа тата тĕрлĕ приправăсемпе ăшаланă фарш (темиçе сий тума юрать) сарса хумалла. Çиелтен майонез сĕрсе духовкăна е кăмакана лартмалла. Хăвăрт тата тутлă.

Сĕтре пĕçернĕ çĕр улми

5–6 çĕр улми, 250–300 мл сĕт, укроп, тăвар кирлĕ.

Çĕр улмине шуратмалла, тăваткал турамалла. Вĕрекен шыв хушмалла, тăвар ямалла та 10–12 минут пĕçерсе илмелле. Хыççăн шывне сăрăхтармалла. Çĕр улми çине вĕри сĕт ямалла. Вăйсăр çулăм çинче 20–25 минут пĕçермелле. Çиес умĕн турăнă укроп сапмалла.

Пĕлетĕр-и эсир?

Пĕтĕмпех кролик пирки

- Тулта клеткăсенче усракан кашни амана çулталăк хушшинче 4 хутран кая мар çăвăрлаттарма пулать, витере усрасан – 5–6 хут.

- Вак, хылчăклă, таса мар улăма, утта, торфа ай сарăм вырăнне усă курмалла мар. Ку вăл мамăка питĕ варалать, ăна пăсать. Мамăклă кроликсен клеткине кĕркунне тата хĕлле кăна ай сарăм хураççĕ. Шултра, çемçе, таса, хылчăксăр улăм хурсан лайăхрах.

- Талăкра кроликăн 400 миллилитр шăк тухать.

- Хупă витесенче (крольчатниксенче) юрăхлă сывлăш температури 10–15 градус ăшă пулмалла. Хĕлле 8 градус ăшă, çулла 25 градус таран улшăнма пултарать.

- 1 килограмм чĕрĕ виçе çине шутласан çитĕннĕ кролик сехетре 2,5 килокалори ăшă кăларать, çура – 5 килокалори.

- Килти хуçалăхсенче çуркуннерен пуçласа хура кĕркуннечченех кроликсене ешĕл курăкпа тăрантараççĕ.

- Кроликсемшĕн белокпа пуян пăрça йышши культурăсен курăкĕ уйрăмах паха.

- Кроликсем клевер, люцерна, пылак люпин, эспарцет тата ыттисене юратса çиеççĕ.

- Кроликсене викăпа сĕлĕ, пăрçапа сĕлĕ хутăшĕ пани питĕ усăллă.

- 100 грамм кролик сĕтĕнче вăтамран 10–15 грамм белок, 15–17 грамм çу шутланать.

- Çак курăксене çитерсен кроликсем чирлесе вилеççĕ: кĕрхи безвременник, варăш кĕпçи, наркăмăшлă упа кĕпçи, шĕпĕн курăкĕ, кикен, пӳрнеске курăкĕ, хурхух, сар пуç.

- Кролик ами талăкра 200 грамм сĕт антарать. Сĕт антарнă тапхăрти сĕт виçи унăн чĕрĕ виçинчен 1,5 хут ытларах.

- Капрофагие пула апат ирĕлесси ӳсет, В ушкăнри витаминсем сахалрах кирлĕ пулаççĕ.

Сурăх усрани тупăшлă

Ялсенче ытти выльăхчĕрлĕхпе пĕрлех сурăхсем те усратпăр. Анчах та ялта хупăнса ларакан çуртсем те хушăнса пынă май сурăх усракан хуçалăхсем те сахалланса пыраççĕ. Акă Нискасси ялĕнче 200 ытла хуçалăх пулсан та иртнĕ касура пĕтĕмпе 120 пуç сурăх шутласа кăлартăм. Вăл шутра 10 пуç качакасемпе путексем. Пĕлтĕр çеç вара 140 пуç пулнăччĕ.

Н.Д. Цыредондоков ăсчах «Сурăхсем ĕрчетесси» кĕнекинче Раççейре сурăхсем çăм, каракуль, кĕрĕк валли тир, аш-пăш тата чăкăтпа брынза хатĕрлеме усраççĕ тесе çырать. Кавказра, Вăтам тата Анатри Атăл, Хĕвел тухăç, Çĕпĕр тăрăхĕсенче пĕтĕмпе 40 ытла ăратлă сурăх усраççĕ пулсан, паллах, чăкăтпа брынза та тăваççĕ пулĕ.

Эпир ялта сурăхсене çăмшăн усратпăр тата ашпăшĕпе те усă куратпăр. Акă пĕр трактористпа, ватăлса çитрĕ пулин те, ывăлĕпе кинне Питрав кунне (июлĕн 12-мĕшĕнче пулать) така пусса паллă тума сурăхсем усраттаратчĕ.

Выльăх-чĕрлĕхе хĕл каçарма ытлă-çитлĕ апат хатĕрлемелле. Халĕ ĕнтĕ хуçалăхсенче çĕр çителĕклех пулнă май утă та ытлă-çитлĕ хатĕрлетпĕр. Ĕне валли те, сурăхсене хĕл каçарма та çителĕклех. Эпĕ юлашки çулсенче сурăхсем валли çулçăллă туратсенчен milĕк ытларах типĕтсе хатĕрлеме тăрăшатăп. Килти пахчара чие хунавĕсене çулçисем сарăлса хытсан çеç касатăп. Çĕмĕрте те çавăн пекех сайралататăп. Ял çумĕнчи çул хĕрринчи посадкăран çамрăк ăвăссене касса килетĕп. Çапла вара 25–30 milĕк хатĕрлетĕп. Milĕке сурăхсене пуш уйăхĕн вĕçĕнче çитерме тытăнатăп. Пĕр кун урлă пĕр milĕк паратăп.

Çак вăхăтра сурăх икĕ путек пăранларĕ. Унăн организмне кальци, фосфор, сера тата ытти элементсем кирлĕ тапхăр пулчĕ ку. Эпĕ апат рационне çĕнĕ çул хыççăнах тĕш тырăсенчен урпа та кĕртетĕп. 150 грамм е ытларах паратăп. Утăпа пĕрле çак апат-çимĕç сурăха та, путексене те лайăх аталанма пулăшать. Лавккаран туяннă минераллă тăвар брикечĕ вĕсен умĕнчен нихăçан та татăлмасть. Çĕнĕ çул уявĕсем хыççăн вара сурăхсене чăрăш турачĕсемпе сăйлатăп.

Çакăн пек тăрантарни сурăхсен çăмне çирĕплетет. Кун пек çăмран хатĕрленĕ çипрен çыхнă чăлханески нумайччен çĕтĕлмест. Çакна калас тетĕп. Ялта ытти выльăх-чĕрлĕх тытнипе пĕрлех сурăхсем усрани те тупăшлă та, усăллă та.

Н. ПЕТРОВ, ĕç ветеранĕ.

Нискасси ялĕ.

Милици хроникинчен

Çын аллинчи ...

Ырă тăвасси кашни çынранах кăмăл вăйне, тепĕр чух чăтăмлăх та ыйтать пулсан, усал шухăша ĕçе кĕртме нумай вăхăт кирлĕ мар.

Акă Муркашри Октябре 50 çул урамри çуртра пĕр сехет хушшинче – ирхи тăхăр сехетрен пуçласа вуннă çурăччен – велосипед çухалать. Ытти чухне подъездра хуçине чиперех кĕтсе тăнă велосипед хальхинче тарнă. 5000 тенкĕ тăракан «юлташĕ» ăçталла кайнине хуçи курса юлайман. Анчах та вăрă 15–18 çулхи çамрăк пулма пултарнине чухлаççĕ-ха. Вăл мĕнлерех кĕлеткеллĕ тата сăн-питлĕ пулнине те.

Халĕ ку ĕçпе следстви пырать, уголовлă ĕç пуçарма хатĕрленеççĕ.

Водительсен те тимлĕ пулмалла

Кунĕн-çĕрĕн тенĕ пекех çул çинче тĕрлĕ транспорт çўрет. Пĕр-пĕр вырăна çитесси те çивĕч ыйту мар. Машина чар та ларса кай. Хăвăра та лайăх, водителе те хушма тупăш.

Анчах тепĕр чухне пассажира лартни водительшĕн тупăшлă мар, тăкаклă та пулать иккен. Акă иртнĕ ытлари кун Шупашкар арçынни Хыркассинче машинăна пĕр çамрăка лартать. Тимлĕ каччă машинăн хăвăртлăх рычагĕ патĕнче ăна кĕсье телефонĕ вăрттăн «куç хĕснине» асăрхать. Те хĕрсем куç хĕснине аса илсе çак телефон умĕнче те чăтса лараймасть вăл. Шомик чарăнăвĕ патĕнче анса юлать, водителе пысăк тав сăмахĕ калать. Ма каламăн-ха? Аллинче телефон пур-çке-ха. Çапла вара 18–19 çулсенчи каччă водителе тăкак кўрет те.

Пичете районти шалти ĕçсен пайĕн материалĕсем тăрăх хатĕрленĕ.

Православи уявĕсем

Святой Илия пророк кунĕ

Илле кунĕ – çуллахи юлашки уяв, Илия пророк уявĕ. Çак кунăн хăйĕн историйĕ.

Израильте виçĕ çул таранах çумăр çуман. Выçлăх пулнă. Турра ĕненекенсем Кармил тăвĕ çине пухăнса вăкăр пуснă. Илия пророк Турра кĕл тунă та, Турă çĕр çине çумăр çутарнă. Пĕтĕм çĕр çинче çимĕç пулма пуçланă.

Илия пророк нумай çул Израиль халăхĕшĕн тăрăшнă. Кирлĕ вăхăтра çумăр та çутарнă, халăха чăн Турра ĕненме йыхравланă. Турă хăвачĕпе вăл вутлă лашасем кўлсе вутлă урапапа пĕлĕт çине çĕкленнĕ. Çавăн чухне аслати кĕмсĕртетни илтĕннĕ. Аслати авăтни те Илия пророкпа çыхăннă. Аслати кĕмсĕртетнипе çынсем çўлти Турă пуррине пĕлнĕ. Çавăнпа ĕнтĕ аслати авăтнă чухне çынсем яланах Турра асăнса пуççапнă.

Илия пророк Çўлти Патшалăх чĕррĕн йышăннă пĕртен-пĕр пророк шутланать.

Августăн 2-мĕшĕнче Ильинкăри чиркў хăйĕн престол уявне яланах паллă тунă. Турра ĕненекенсем Илия пророка чысланă.

Ваттисем Илле кун çумăр пулсан малалла та тăтăшах çумăр пулать тенĕ. Уяв кунĕнчи çумăр тивлет парать тенĕ. Çавăнпа та унпа пит-куçа çума каланă. Çапла туни чир-чĕртен тата куçăхасран сыхланма пулăшать иккен.

Çул çинчи инкек

Кушака пула-ши?

Июлĕн 25-мĕшĕнче пирĕн район территорийĕпе иртекен М–7 трасса çинче каллех инкек пулса иртрĕ. Москакасси ялĕ çывăхĕнчи аварире хĕрарăм водителĕн пурнăçĕ сарăмсăр татăлчĕ.

Инкеке куракансем çапларах каласа параççĕ. Кăнтăрла иртни виçĕ сехет çурă тĕлĕнче Москакасси ялĕнчен çăмăл машина федераллă автоçул çине тухнă хыççăн çул хĕррине сарнă вак чул çине кĕрсе каять. Çав самантрах водитель мĕн тумаллине чухлайманран пулĕ çăмăл машина хирĕç килекен транспорт речĕ çине çитсе ларать. Унта вара шăпах «тягач» пынă пулнă.

Малтанласа инкек кушак айăпĕпе тухнă теме те май пур. Мĕншĕн тесен çăмăл машина салонĕнче, водитель ларкăчĕ умĕнчи педальсем патĕнче, сăрă тĕслĕ кушак (вилнĕ паллах) пурччĕ. Тата тепĕр сăлтав та пулма пултарать. Хĕвел пайăркисем шăп та лăп хирĕç ўкнĕрен вĕсем водителĕн куçне шартарса яма пултарнă.

Халĕ ку ĕçе следовательсем тишкереççĕ.

Водительсене вара тепĕр хут асăрханулăх пирки аса илтерес килет. Машина салонĕнче чĕр чунсем илсе çўрени те инкек сăлтавĕ пулма пултарассине ан манăр.

С. ИВАНОВ,
районти ГИБДД уйрăмĕн пуçлăхĕ,
полицин аслă лейтенанчĕ.

Объявления

Требуется водитель на автомашину КамАЗ-самосвал. Тел.: 8-927-858-88-66. 1-2.

* * *

Участник долевой собственности Комиссаров Николай Николаевич, 1947 года рождения, проживающий по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Чуманкасинское сельское поселение, с. Чуманкасы, сообщает о намерении выделa земельного участка в счет доли в праве общей собственности на земельный участок из земель сельскохозяйственного назначения на территории СХПК им. Чапаева расположенного в поле № 6, полевой севооборот № 2 площадью 1,27 га (пашни) для производства сельскохозяйственной продукции.

Все претензии по месту расположения земельного участка прошу направить в 2 адреса:

1. Администрации Чуманкасинского сельского поселения.
2. Комиссарову Николаю Николаевичу, проживающему по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Чуманкасинское сельское поселение, с. Чуманкасы, ул. Школьная, д. 17.

* * *

Участник долевой собственности Комиссаров Николай Николаевич, 1947 года рождения, проживающий по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Чуманкасинское сельское поселение, с. Чуманкасы, сообщает о намерении выделa земельного участка в счет доли в праве общей собственности на земельный участок из земель сельскохозяйственного назначения на территории СХПК им. Чапаева расположенного в поле № 6, полевой севооборот № 2 площадью 1,27 га (пашни) для производства сельскохозяйственной продукции.

Все претензии по месту расположения земельного участка прошу направить в 2 адреса:

1. Администрации Чуманкасинского сельского поселения.
2. Комиссарову Николаю Николаевичу, проживающему по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Чуманкасинское сельское поселение, с. Чуманкасы, ул. Школьная, д. 17.

* * *

Участница долевой собственности Комисарова Елена Матвеевна, 1933 года рождения, проживающая по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Чуманкасинское сельское поселение, с. Чуманкасы, сообщает о намерении выделa земельного участка в счет доли в праве общей собственности на земельный участок из земель сельскохозяйственного назначения на территории СХПК им. Чапаева расположенного в поле № 6, полевой севооборот № 2 площадью 2,54 га (пашни) для производства сельскохозяйственной продукции.

Все претензии по месту расположения земельного участка прошу направить в 2 адреса:

1. Администрации Чуманкасинского сельского поселения.
2. Комисаровой Елене Матвеевне, проживающей по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Чуманкасинское сельское поселение, с. Чуманкасы, ул. Школьная, д. 17.

* * *

Администрация Юнгинского сельского поселения извещает о проведении общего собрания долевиков СПК «Новая Юнга», которое состоится 17 сентября 2011 года в 16.00 часов по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Юнгинское сельское поселение, с. Юнга, ул. Центральная, д. 5, корп. 1.

В повестку дня включены вопросы:

1. О ходе выдела земельных долей на территории сельского поселения.
2. Изменения в законодательстве по выделу земельных долей.
3. Рассмотрение и утверждение списка невостребованных земельных долей.
4. Разное.

Адрес места ознакомления с документами Юнгинского сельского поселения: с. Юнга, ул. Центральная, д. 5, корп. 1 в здании ЮСДК, время с 8-00 ч до 17-00 ч кроме субботы и воскресенья. Текст объявления размещен на информационных стендах сельского поселения.

Пĕлтерўсем. Объявления

Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Изготовим на заказ: срубы, беседки любого размера. Цена договорная, доставка по району бесплатно.
Тел.: 8-927-667-28-32, 8-919-656-13-84. 2-5.

Продаем комбикорма. Доставка. Тел.: 8-927-992-05-19. 3-5.

* * *

Продаю: кирпич одинарный М-100; М-125; М-150; керамический полуторный М-125; двойной керамический; силикатный белый, желтый; КББ р-р 20х20х40; красный половняк, некондиция, гравмассу, керамзит. Доставка и разгрузка на манипуляторе. Документы.
Тел.: 8-903-358-20-97, 8(8352) 44-20-97. 5-9.

* * *

Реализуем песок речной, щебень разных фракций по низким ценам. Возможна доставка.
Тел.: 8-937-384-06-50. 11-12.

* * *

Ремонт холодильников: торговых, бытовых. Гарантия. Тел.: 8-905-345-06-48. 6-6.

* * *

Ĕне, вăкăр, пăру, сурăх туянатăп.
Тел.: 8-905-343-60-63. 5-7.

* * *

СИСТЕМА АВТОМАТИЧЕСКОГО ПОЛИВА
ландшафтные работы
укладка газона
обслуживание
т.36-27-79, 8-967- 470-27-79

Продаю автомашину 21093 1999 года выпуска, инжектор, цвет фиолетовый, в хорошем состоянии, на ходу, цена 75 тыс. руб. Тел.: 8-927-841-15-49, 8-927-991-67-56.

* * *

Продаю песок, гравмассу, бой кирпича, керамзитоблоки, с доставкой. Тел.: 67-66-95, 8-905-347-99-15. 2-5.

* * *

ООО «Металлком» закупает лом черных и цветных металлов по высоким ценам. Тел.: 8-903-389-29-93. 1-2.

* * *

В с. Чуманкасы продается кирпичный дом с двухэтажными кирпичными надворными постройками: сарай, баня, склад, гараж и мастерская. Адрес: с. Чуманкасы, ул. Советская, д. 5. Тел.: 8-927-998-59-72.

* * *

Продаю пропаренные качественные керамзитобетонные блоки, песок речной, гравмассу, керамзит, цемент. Требуются рабочие для производства керамзитобетонных блоков. Адрес: «Моргаушагропромснаб». Тел.: 8-905-340-07-78. 2-5.

* * *

Куплю корову, бычка, телку, овец.
Тел.: 8-905-342-39-43. 1-10.

* * *

ООО «Управляющая компания ЖКХ» Моргаушского района объявляет открытый конкурс по привлечению подрядных организаций для выполнения работ по капитальному ремонту многоквартирных домов в 2011 году

Место выполнения работ (адрес многоквартирного дома)	Краткое описание работ	Начальная (максимальная) цена договора, руб.
дом №20 по ул.Гагарина с.Моргауши	Капитальный ремонт кровли, подвальных помещений и внутридомовых инженерных систем	997 512
дом №40 по ул. 50 лет Октября с.Моргауши	Капитальный ремонт крыши, подвальных помещений и внутридомовых инженерных систем	928 015
дом №44 по ул.50 лет Октября с.Моргауши	Капитальный ремонт кровли, подвальных помещений и внутридомовых инженерных систем	1 606 013
дом №2 по ул.Зеленая д.Москакасы	Капитальный ремонт крыши, подвальных помещений и внутридомовых инженерных систем	801 166
дом №4 по ул.Зеленая д.Москакасы	Капитальный ремонт крыши, подвальных помещений и внутридомовых инженерных систем	679 366
дом №5 по ул.Зеленая д.Москакасы	Капитальный ремонт крыши и внутридомовых инженерных систем , ремонт и утепление фасада	883 947
дом №6 по ул.Зеленая д.Москакасы	Капитальный ремонт крыши, подвальных помещений и внутридомовых инженерных систем	879 773
дом №12 по ул.Новая с.Б.Сундырь	Капитальный ремонт крыши и подвальных помещений, ремонт и утепление фасада	981 387

Участники конкурса предоставляют обеспечение заявки.

Срок выполнения работ: после заключения договора в течение одного месяца.

Документы для участия в конкурсе принимаются в запечатанном конверте не позднее 11.00 ч 19 августа 2011 года. Дата вскрытия конвертов: в 11.00 ч 19 августа 2011 года.

По всем вопросам обращаться в комиссию по адресу: с.Моргауши, ул.Гагарина, д.10а,тел.: 62-2-43, 63-4-30.

Подробная информация размещена на сайте администрации Моргаушского района :http://gov.cap.ru/main.asp?govid=71 .

Спутниковые антенны от 4000 руб.
Установка, гарантия.
Тел.: 8-905-345-77-19. 5-6.

Продаем: профнастил – 260 руб./м., профиль – 60 руб./м., трубы – 140 руб./м., банная печь – 10500 руб., доски обрезные – 6400 руб./куб.м. Всегда низкие цены. Доставка по району. Тел.: 8-927-848-84-30. 5-5.

Продаю: гравмассу, щебень, песок, керамзит, бетон, торф, чернозем. С доставкой. Скидки.
Тел.: 8-927-668-70-15. 9-13.

пластиковые ОКНА
Немецкое качество
Окна STAR
6-камерный профиль ПО ЦЕНЕ 3-камерного
подробности по телефонам: 8-9603101816
скидки до 35%
Пенсионерам доп. скидки
Офис продаж в здании рынка с.Моргауши
Окна стали дешевле...

кредитный потребительский КАПИТАЛ кооператив граждан
работает на вас
6-23-10
всегда доступные займы
ипотечные займы с использованием материнского капитала
принимаем сбережения под серьёзные проценты
ул. Чапаева, 44 а / 2 8 927 667-48-92
kpkgkapital.ru
работаем с пайщиками



БЕТОН, РАСТВОР любых марок.
Тел.: 38-87-78, 8-927-66-88-778.
Песок, ОПГС (гравмасса), щебень.
Тел.: 38-84-40, 8-927-66-88-440.
Доставка миксерами, самосвалами. 26-50.

для пайщиков
СОДРУЖЕСТВО
КРЕДИТНЫЙ ПОТРЕБИТЕЛЬСКИЙ КООПЕРАТИВ
ВЫДАЕТ ЗАЙМЫ
• на любые неотложные нужды
• на покупку и строительство жилья под материнский капитал
ВНИМАНИЕ! ЛЬГОТНЫЙ ЗАЙМ “СКОРО В ШКОЛУ”
ПРИНИМАЕТ СБЕРЕЖЕНИЯ
• пенсионерам льготные % ставки
ДО 31.08.2011 г. ДЕЙСТВУЕТ АКЦИЯ С ПОВЫШЕННЫМИ % СТАВКАМИ
Кредитный потребительский кооператив “Содружество” отделение №3, с. Моргауши, ул. 50 лет Октября, д. 23
тел. 62-8-86, 8-919-673-42-19
www.kpksodrugestvo.ru

Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории «земли сельскохозяйственного назначения» с кадастровым номером 21:17:071001:147, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Кадикасинское сельское поселение, для ведения личного подсобного хозяйства, площадью 6412 кв.м.;

Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.

	суббота 30 июля				воскресенье 31 июля				понедельник 1 августа				вторник 2 августа			
Местное время	04:00	10:00	16:00	22:00	04:00	10:00	16:00	22:00	04:00	10:00	16:00	22:00	04:00	10:00	16:00	22:00
Облачность %																
Осадки мм																
Температура °С	+20	+25	+27	+21	+19	+23	+25	+19	+18	+20	+22	+18	+12	+19	+21	+16
Давление мм	739	738	738	737	737	736	736	736	737	734	735	736	741	739	741	743
Влажность %	88	77	60	79	89	83	70	87	85	93	76	76	69	76	65	59
Ветер	З	З	С-З	З	З	З	С	С-В	С	С-В	С	С-В	С-З	С-В	С-В	С-В
м/с	4	3	4	2	4	2	3	1	1	4	6	3	4	4	7	4
Солнце восход/заход		04:52	21:05			04:54	21:03			04:56	21:01			04:58	20:59	
Луна восход/заход		04:22	20:25			05:49	20:45			07:17	21:03			08:46	21:19	
фаза																

Муркаш районĕнчи «Çĕнтерўялавĕ» хаçат

УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ:
Чăваш Республикин Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерстви.
ЧР Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерствин «Муркаш районĕн «Çĕнтерўялавĕ» хаçат редакцийĕ» автономи учрежденийĕ.

Тĕп редактор А.И. ТИХОНОВ.

АДРЕС: 429530, Чăваш Республики, Муркаш ялĕ, Мир урамĕ, 9А çурт.
ТЕЛЕФОНСЕМ: тĕп редактор - 62-1-36, яваплă секретарь - 62-2-82, бухгалтери - 62-1-35, пайсем: общество пурнăç пайĕ - 62-2-82, экономика тата социаллă пурнăç пайĕ - 62-1-38.
Факс: 62-1-36. E-mail: morpress@cbx.ru, redaction@cbx.ru

Çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникаци сферине пăхса тăракан Федераллă службăн Чăваш Республикипе – Чăваш Енпе ĕçлекен управленийĕ 2009 çулхи раштавăн 7-мĕшĕнче ПИ ТУ 21-00073 № регистрациленĕ.

Калăпăшĕ 1,5 пичет листи.
Ал çырăвĕсене рецензилемеççĕ, каялла тавăрса памаççĕ, 2 страницăран пысăкрахчисене йышăнмаççĕ.
Рекламăпа пĕлтерўсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.

ИЗДАНИ ИНДЕКСĔ: 54822.
Хаçат чăвашла юн тата шăмат кунсерен тухать.
Номер дежурнăйĕ Николаева Н.Н.
Пичете панă 29.07.2011 ç.
Пичете памалли вăхăт: графикпа – 17 сех. 20 мин., чăннипе – 17 сех. 20 мин.
Заказ Тираж 4282.

Номер набран и сверстан в АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерўялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.